Олимпиадные задания по чувашскому языку и литературе для муниципального тура республиканской олимпиады школьников общеобразовательных организаций с изучением чувашского языка 2017-2018 учебный год. 7 класс

Максимальный балл – 50
Время выполнения – 90 минут

Текста вулăр, хушнă ĕçсене тăвăр.

(1)Пыратăп вăрманпа утса. (2)Хурăнлăхра куккук авăтать, сар кайăк юрлать. (3)Чăрăшлăхра тĕпеклĕ кăсăя, пилеш кайăкĕ юрланине илтетĕп. (4)Пурте хăйсен вырăнĕнче пурăнаççĕ. (5)Пурте юрă юрлаççĕ, апла пулсан хăйсене нишлĕ-чирлĕ туймаççĕ.

(6)Утатăп васкамасăр, сасăсене тухтăр ача кăкăрне итленĕ пек тимлĕ итлетĕп. (7)Хальлĕхе пурте йĕркеллĕ кунта. (8)Çуйхашни-пăтранни те çук, ывăнни те сисĕнмест. (9)Вăрман тарăннăн та пĕр тикĕссĕн сывлать. (10) Ула такка кĕвĕллĕн таклаттарни илтĕнет, апла пулсан вăрман чĕри те сыввăн тапать.

(11)Мăк шурлăхне çитсе килес тетĕп. (12)Вăл ĕнтĕ инçех те мар. (13)«Сывă-и, мăк шурлăхĕ, мĕнле пурăнатăн-курăнатăн?»

(14)Шурлăх нимĕнле сасă та памасть. (16)Мĕн пулнă? (17) Унччен шурлăх кашнинчех текерлĕк, чарлан е ытти çавăн пек кайăк сассипе саламлаканччĕ мана. (18)Хушăран тăрна сасси те хăватлăн илтĕнкелетчĕ. (19)Хальхинче шăп...

Ĕçсем

1. Текстран кайăк ячĕсене çырса илĕр, вырăсла куçарăр. Чăвашла та, вырăсла та пĕр пек ятлă 2 кайăк ятне çырăр.

2. Текстра ўт-пў пайĕн ячĕсене тупăр, вырăсла куçарăр.

3. Текстран евĕрлев сăмахĕнчен (звукоподражательное слово) пулнă глагола (глаголсене) çырса илĕр, вырăсла куçарăр. 3 евĕрлев сăмахĕ аса илĕр те вĕсемпе предложени çырăр.

4. Чăвашла вĕренекен урăх халăх çыннисене сăмах тăвакан аффикс пĕлтерĕшне пĕлни мĕн тума кирлĕ? Текстра мĕнле аффикс хушăннипе темиçе япала ячĕ пулăннă? Аффикс пĕлтерĕшне палăртăр, текстран çав аффикс хушăнса пулнă сăмахсене тупăр, çав аффикспа пулнă тепĕр виçĕ тĕслĕх çырăр.

5. Вырăсларан чăвашла куçарăр.

Глаза видят, уши слышат, ноги ходят. У меня болит правая нога. У тебя не болит нога? Мои родители живут в деревне. Где живут твои родители?

6. *Мăк шурлăхĕ* тенине чăвашла тата мĕнле калама пулать? Вырăсла куçарсан мĕнле пулать?

7. Ваттисен сăмахĕсене вĕçлĕр.

Уй куçлă, ...
Вăрман пек пуянни çук, ...
Пĕри вăрмана, ...
Пысăк юман та пĕчĕк ....
Вăрмана вутă турттармаççĕ, ...

8. *Юман* сăмахпа 5 сăмах майлашăвĕ çырăр (*юман* сăмах пăхăнакан (ăнлантаракан) сăмах пултăр), вырăсла куçарăр.

9. Чăваш халăх юррисенче юман мĕне (кама) пĕлтерет? Тĕслĕхпе ĕнентерĕр.

10. *Экологи* сăмахпа синквейн çырăр.